

### АННЕ КУЛЛИ

Хӗвел кулли —
анне кулли,
Хӗвел ӑшши —
анне ӑшши,
Анне пурри —
телей пурри,
Ман аннере —
ҫемье ӑшши.

**Оля АНДРЕЕВА, 3 класс,**
**Тойкилтӗ шкулӗ**

### МАНӐН АННЕ

Манӑн анне ир тӑрать,
Тӳрех ӗҫе тытӑнать.
Сыснине апат парать,
Ӗнине те шӑварать.

Апатне те пӗҫерет.
Чейне те вӑл хатӗрлет.
Ҫӑкӑрне касса парать,
Пире ҫиме йыхӑрать.

Ачасем, аннесене
Хисеплӗр те юратӑр!
Йывӑр чухне вӗсене
Пулӑшма та ан манӑр.

**Катя Сорокина, 6 класс,**
**Шурча шкулӗ**

### ЧИ ХАКЛИ

Юрататӑп эп ӑна
Юрататӑп ҫав ҫынна.
Ах, аннеҫӗм, анне ,
Чи хакли эс ҫӗр ҫинче!

Савӑнатӑп эс пурришӗн,
Савӑнатӑп эс кулнишӗн.
Ах, аннеҫӗм, анне,
Ҫапла пултӑр ӗмӗрне!

**Катя Рыжкова, 7 класс,**
**Шурча шкулӗ**

### АННЕНЕ

Эх, аннеҫӗм, ман анне!
Пӗлет-ши кану мӗнне?
Вырт ҫемҫе тӳшек ҫине,
Хам пуҫтарӑп вырӑхне.

Чун юратнӑ аннене
Май пур таран пулӑшӑп.
Ват кукамай калашле
Турра саншӑн тав тӑвӑп.

**Коля Иванов, 5 класс,**
**Шурча шкулӗ**

# АННЕ МАНШӐН ТӖСЛӖХ

**Маннӑн аннене — Надежда Николаевнӑна — ялти ҫынсем ҫав тери хисеплеҫҫӗ. Пилӗк ачана вӗрентсе ҫын тума ҫӑмӑл тетӗр-и?**

Анне вара кашни ачан пултарулӑхӗ-ӳсӗмӗшӗн чунтан савӑнать, пире татах та ӑслӑрах, пултаруллӑрах, илемлӗрех тӑвассишӗн ҫунать. Укҫа-тенки ҫитсе пымасан та пире ӑслӑ кӗнекесем илсе парса савӑнтарать, сывлӑх ҫирӗплентӗр тесе йӗлтӗр те туянса парса хавхалантарать. Анне нихҫан та усала вӗрентмест. Эпир аннепе пӗр-пӗрне ӑнланатпӑр. Кирек мӗнле ыйту, шухӑштӗллев ҫуралсан та, ун патне чупса пыратпӑр. Анне сӑмахне куллен ӑша илме тӑрӑшатӑп; анне пек сӑпайлӑ, вашават, ӗҫчен ҫын пулма ӗмӗтленетӗп. Анне калать пулсассӑн унӑн сӑмахӗнчен тухмалла мар. Амӑшӗн сӑмахӗнчен тухакан ҫыннӑн пархатарӗ ҫук тесе ахальтен каламан ӗнтӗ ваттисем.

**Алина Степанова, 8 класс**
**Очӑкасси шкулӗ**



## КУКАМАЙ ПУРРИ — ТЕЛЕЙ

**Манӑн кукамай Павлова Алевтина Гавриловна ятлӑ. Вӑл Шаптак ялӗнче пурӑнать.**

Кукамай ырӑ та ӑшӑ кӑмӑллӑ, ылтӑн вӗлле хурчӗ пек ӗҫчен. Вӑл нумай ҫул хушши шкулта ачасене вӗрентнӗ, вӗсене чунтан юратнӑ, ҫӗршывшӑн усӑллӑ ҫынсем пулччӑр тесе тӑрӑшнӑ. Вӗренекенсем те ӑна хисепленӗ, кӑмӑлланӑ.Лайӑх ӗҫленӗшӗн тав хучӗсем парса чысланӑ кукамая.

Вӑл кукаҫипе пӗрле тӑватӑ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ, вӗсене пӗтӗм чун ӑшшине панӑ. Ачисем аслӑ пӗлӳ илнӗ, пурнӑҫра хӑйсен ҫулне тупнӑ.

Халӗ вара кукамай пире, тӑватӑ мӑнукне, ӑшӑ кӑмӑлпа лӑпкаса, юратса ӳстерет, пирӗншӗн ырми-канми тӑрӑшать.

Эпӗ кукамая питӗ юрататӑп. Уявсенче ӑна хам ӑсталанӑ парнесемпе савӑнтаратӑп, шкулта лайӑх вӗренме тимлетӗп. Аннепе кукамая пулӑшма час-часах ҫӳретӗп.

Хаклӑ кукамай! Эсӗ нумай-нумай ҫул пурӑн, эсӗ пурри пысӑк телей.

**Аркадий СЕРГЕЕВ, 3кл.**
**Тойкилтӗ шкулӗ**

### ЭП АННЕНЕ ЮРАТАТӐП

Эп аннене юрататӑп,
Вӑл та мана юратать.
Эпӗ ӑна пулӑшатӑп
Вӑл та мана пулӑшать.
Анне килте пулмасан,
Ӑна эпӗ курмасан
Нимӗн те тӑвас килмест,
Унсӑрӑн пурнас килмест.

**Алена ИОСИФОВА,**
**3 класс**
**Тойкилтӗ шкулӗ**

### МАНӐН АННЕ

Ман анне шкулта ӗҫлет
Пурнӑҫ калчи хатӗрлет.
Алла ручка тыттарать,
Вӑл ҫырма хӑнӑхтарать.

Шутлама та, вулама та
Вӗрентет ачасене.
Юрлама та, ташлама та
Вӑл хистет пепкесене.

Сас паллипе паллашсан —
Сыпӑксем туса вулаҫҫӗ.
Шыв юххи пек вуласан —
Юмахсем хӑйсем ҫыраҫҫӗ.

Ачасем ман аннене
Питӗ хытӑ юратаҫҫӗ.
Тепӗр чух юратнӑран
«Анне» тесе те чӗнеҫҫӗ.

**Кристина Петрова,**
**7 класс,**
**Тойкилтӗ шкулӗ**

## Уяв ячӗпе

Аннен паян савнӑ кун,
Паян хаклӑ уяв ун.
Саламлатӑп чӗререн,
Хакли ҫук ман аннерен.

Пысӑк уяв ячӗпе
Парӑп ҫӗлесе кӗпе.
Тата парӑп шӑрҫине
Ҫакӑн ӑна мӑй ҫине.

Парӑп хӗрлӗ тюльпансем,
/Хам алӑпа тунисем/
Савӑнатӑн эс вара
Маншӑлла пӗрле кулса.

**Наташа ЯКОВЛЕВА**
**7 класс, Шатракасси шкулӗ**

## Юратнӑ анне

Аннерен хакли те ҫук,
Аннерен пахи те ҫук,
Вӑл пире чунтан савать,
Ҫитӗнме вӑй-хал парать.

Вӑл тӑрать те ир-ирех
Ӗҫе пуҫлать пикенсех,
Эпир тутӑ пултӑр тет.
Эпир питӗ пултӑр тет.

Ан чирле эс, сывӑ пул,
Ялан савӑнҫӑлӑ пул.
Пире ҫӑмӑл эс пулсан,
Пурӑнмашкӑн пит аван.

**Надя Майорова, 7 класс,**
**Тойкилтӗ шкулӗ**

## Пӗртен-пӗрре

Ман анне тӗлӗнтерет,
Тутлӑ апат пӗҫерет.
Ҫӑм арлама вӑл пӗлет,
Тӗррине хитрке тӗрлет.

Ача садне кунсерен
Вӑл ӗҫлеме вӗҫтерет.
Ачасене кунӗн-ҫӗрӗн
Тем те тума вӗрентет.

Эпӗ ӳсӗп, пысӑк пулӑп,
Тарӑхтармӑп нихӑҫан.
Аннене эп юрататӑп,
Вӑл пӗртен пӗрре-ҫке ман.

**Саша СТЕПАНОВ, 5 класс,**
**Шурча шкулӗ**